# *Манăн туслă çемье*

Е.Н.Федорова, Мелеуз хулинчи
И.Я.Яковлев ячĕллĕ ачасен
пултаруллăхне аталантаракан
Центрĕн вĕрентекенĕ

**Тĕллевĕсем:** Ачасене хăйсен çемьи çинчен калама вĕрентесси; тăванлăх сăмахĕсемпе пуплевре тата çырура тĕрĕс усă курма вĕрентесси; тăван çынсене, атте-аннене хисеплеме, юратма, вĕсене пулăшма, ĕçчен пулса ÿсме вĕрентесси; çемье çинчен çыхăнуллă каласа пама хăнăхтарасси;

Çĕнĕ сăмахсене калама хăнăхтарасси: урай шăлатăп, урай çăватăп, тусан шăлатăп, чечек шăваратăп, савăт-сапа çăватпăр, пулăшатпăр. Çемьере туслă пулма, атте-аннене пулăшма сĕнесси. Чăваш йăли-йĕркисемпе паллаштарасси.

**Кăтарту хатĕрĕсем:** ачасен çемьисен сăн-ÿкерчĕкĕсем; чăваш тумĕсем, хут пуканесем; магнитофонпа чăваш юррисем.

Урок юхăмĕ.

1. **Урока йĕркелесе ярасси.**
   Шăнкăрав сас пачĕ урока чĕнсе
   Пĕтĕм класс шăпланчĕ парта хушшинче.
   Ак кĕрет учитель савăк сăнпалан
   Кăмăллă вăл питĕ пирĕнпе ялан.

- Ырă кун сире, ачасем тата хаклă хăнасем!
Ачасем, пĕр-пĕрин çине пăхса илĕр те йăл кулăр, пĕрне-пĕри ăнăçу сунăр. Паянхи кун пĕрле ĕçлесе савăнăç кĕрессе шанатăп. Эпĕ те сире пысăк ăнăçусем сĕнетĕп.

2. **Паллаштару саманчĕ.**

- Эпир хăнасене хамăр çинчен каласа парар-ха. (Пурте пĕрле калатпăр).
Акă пирĕн ачасем
Пĕчĕкренех маттурсем: Эпĕ вара Элина, эпĕ – Ян, эпĕ – Коля, эпĕ – Рамал, эпĕ – Даша, эпĕ – Антон, эпĕ – Ангелина,
(пурте пĕрле)
Пурте пĕрле вĕренер.
Ялан туслă пурăнар.
- Ачасем, эсир миçемĕш класра вĕренетĕр?
- Чăваш чĕлхи урокĕсенче эсир мĕн тăватăр?
- Сире кам вĕрентет?
- Эсир вĕренме юрататăр-и?

Эпир пурте пĕрле пысăк çемьере пурăнатпăр. Пирĕн класс та пысăк та туслă çемье. Пĕр-пĕрне пулăшатпăр . Чăвашла вулама çырма вĕренетпĕр. Чăвашсен йăла-йĕркисемпе паллашатпăр. Асатте-асанне чĕлхине упрама вĕренетпĕр.

**3. Урокăн тĕллевĕсемпе паллаштарасси.**

- Паян эпир урокра çемье çинчен калаçатпăр. Атте-аннесене мĕнле пулăшни çинчен каласа пама вĕренĕпĕр. Ĕлĕкхи чăвашсен йăли-йĕркипе паллашăпăр.

**4. Çемье çинчен калаçу ирттересси.**

Кам-ха пире ачашшăн
Лăпкать пĕчĕкрен?
Чипер çын тăвасшăн
Çунать чĕререн.
Вăл пирĕн ……(анне).



- Кам хăйĕн амăшĕ çинчен каласа парасшăн? (ачасен хуравĕсем, амăшĕсен сăн ÿкерчĕкне тытса каласа пани).

Анне – вăл чи маттурри, чи ăсли, чип ахи, чи ĕçченни. Аннене савса, юратса тĕрлĕрен сăвăсем, юрăсем халанă.

- Ачасем, кам-ха сиртен анне çинчен сăвă пĕлет.(ачасен сăввисене итлетпĕр).

Сар хĕвел ăш хĕлхемне
Сапаларĕ савăнса,
Ма тесессĕн аннене
Патăм юрă юрласа.
Пăхрăм та анне çине:
Сар хĕвел пек ун кулли.
Ма тесессĕн ман анне
Çĕр çинче чи илемли.

Аннене эп юратап
Аттене эп юратап
Хам пĕчĕккĕ пулсан та
Вĕсене пулăшап.
Юратать мана анне
Юратать мана атте
Эпир пурте çемьере
Юрататпăр пĕр-пĕрне.



- Маттур ачасем. Эсир питĕ пултарулла. Халĕ канса илме сĕнетĕп. Паян пирĕн пата тава тивĕçлĕ артистсем килчĕç. Вĕсем те пире анне çинчен мыскара кăтартĕç.

«Манăн анне чи хитри»

Автор: Вăрманта пурăннă пысăк тăмана – пысăк куçлă, пысăк çăварлă. Унăн пĕчĕк чĕппи пулнă. Тăманасем каçхине çеç вĕçеççĕ. Вĕсем хĕвелтен хăраççĕ. Тăмана чĕппине каланă тет:

Тăмана: Пĕчĕк чĕппĕм, кăнтăрла вĕçсе ан тух. Хĕвел сана суккăрлатĕ.

Чĕппи: Юрĕ, аннеçĕм.

Автор: Анчах, чĕппи итлемен тет. Вăл йăввинчен вĕçсе тухнă та курми пулса тăнă. Тăмана чĕппи макăрса янă.

Чĕппи: Анне, аннеçĕм, эсĕ ăçта?

Автор: Ăна упа курнă тет.

Упа: Эсĕ кам?

Чĕппи: Эпĕ тăмана чĕппи. Манăн анне тăмана. Эпĕ ниме те курмастăп. Мана анне патне илсе кайăр-ха.

Упа: Мĕнле санăн аннӳ?

Чĕппи: Манăн анне чи хитри, чи илемли. Унăн куçĕсем ырă та хаваслă. Манăн анненни пек куçĕсем никамăн та çук. (Артистсем пуç таяççĕ).

- Выляканĕсем килĕшрĕç-и?

**5. Çемье çинчен калаçасси.**

- Тĕрĕс, анне чи çывăх çын. Вăл çемьере çутă хĕвел . Сирĕн çемьере камсем пур? Кам хăйĕн çемьи, ăрăвĕ çинчен каласа парать? (Ачасем хăйсен ăру йывăçĕ тăрăх каласа параççĕ).



Манăн анне чи лайăххи. Вăл ирех тăрать, апат пĕçерет, çитерет. Киле çурта тасатать. Кĕпе çăвать, якатать. Мана шкула ăсатать. Аннепе пĕрле чухне яланах хаваслă. Килте вăл хĕвел пекех. Анне мана вĕренме пулăшать. «Ĕçе юрат, ĕçчен пул», - тет. Юрататăп сана, аннеçĕм! Телейлĕ пул!

**6. Кĕнекепе ĕçлесси.**

- Вуласси.

- Вырăс чĕлхине куçарасси.

- Калава тишкересси.

- Çĕнĕ сăмахсемпе паллаштарасси: урай çăватăп – полы мою; чечек шăваратăп – цветы поливаю; тусан шăлатăп – пыль протираю; чашăк-тирĕк çăватăп – посуду мою.

**7. Хăнана кайни.** Кашнин çемьи пысăк. Хулара та, ялта та тăвансем пурăнаççĕ. Каяр-ха хăнана. Кам мĕнпе каять (калаçу).

Вăйă «Почтălла».

-Шăнкăр- шăнкăр.

- Кам унта?

- Мăнуксем, асанне-асаттесем.

- Ăçтан?

-Хуларан.

- Хулара мĕн тăваççĕ? (юрă юрлаççĕ, сăвă калаççĕ).

**8. Чăваш тĕррисемпе паллаштарасси.**

Пирĕн асанне-асаттесем питĕ ĕçчен пулнă. Вĕсем питĕ илемлĕ тĕрленĕ пир тĕртнĕ. Эпир те вĕсем пек чăваш тĕррисене тĕрлесе илер-ха? (пукане тумне тĕрлени). Хăнана кайсан асанне-асаттесене парнелĕпĕр.





**9. Пĕтĕмлетӳ.**

- Сире паянхи урокра мĕн килĕшрĕ? Мĕн тума вĕрентĕр, мĕнпе паллашрăр?

**10. Килти ĕç пани.**

Атте-аннене килте мĕнле пулăшни çинчен каласа пама, «Манăн туслă çемье» презентаци  туса килесси.

Муниципальное бюджетное образовательное учреждение
дополнительного образования Центр развития творчества детей и
юношества имени чувашского просветителя Ивана Яковлева
муниципального района Мелеузовский район Республики Башкортостан

# Открытый урок

# *«Манăн туслă çемье»*

**Выполнила педагог
дополнительного образования
ЦРТД и Ю им.И.Яковлева
МР Мелеузовский район
Республики Башкортостан
Федорова Е.Н.**

**Мелеуз - 2017**



# Разработка занятия
# по чувашскому разговорному языку
# на тему «Моя дружная семья»

Автор-составитель:
Федорова Е.Н., педагог
дополнительного образования
МБОУ ДО ЦРТД и Ю
им.И.Яковлева МР
Мелеузовский район

2017г